# Спорт тусĕ те, алĕç ăсти те



Районта алĕç ăстисем сахал мар. Вĕсенчен кашни хăйне евĕрлĕ япала ăсталать. Ăстаçăсен чи лайăх ĕçĕсемпе районта, республикăра иртекен мероприятисенче паллашма пулать. Çавăн пекех кашни ялти Культура çуртне вырăнти ăстасен куравне йĕркелет. Сире паян Хусанушкăнь тăрăхĕнчи пултаруллă çынпа паллаштарасшăн.

Валентин Ефимович Харитонов 1947 çулта çуралнă. 1965 çулта производство вĕрентĕвĕн шкулне пĕтернĕ. 1966-1969 çулсенче Хусанушкăнь ял клубĕнче ĕçленĕ. 1969-1970 çулсенче И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика университечĕн физкультура учителĕсен курсĕнче вĕреннĕ. Унтан 12 çул хушши Хусанушкăнь шкулĕнче физкультурăпа рисовани учителĕнче тăрăшнă. 1980-1987 çулсенче Культура çуртĕнче илемлĕх ертÿçинче, унтан ÿкерÿçĕре ĕçленĕ. Паян чылайăшĕ Валентин Харитонова аслă ăрури спорт ветеранĕ пек пĕлет. 74 çулхискер тăтăшах спорт ăмăртăвĕсене хутшăнса республика, район чысне хÿтĕлет, яланах медальсемпе таврăнать.

Çав вăхăтрах вăл алĕç ăсти те иккен. Валентин Харитонов пĕр вырăнта ала усса ларма юратмасть. Унăн, амăшĕпе кăна ÿснĕскерĕн, килти пур ĕçе те ачаллах тума вĕренме тивнĕ. Валентин Харитонов шкулта вĕреннĕ чухнех ÿкернĕ, тĕрлĕ япаласем ăсталанă. Çамрăк ачан туртăмĕпе ăсталăхне Григорий Спиридонович Праулов вĕрентекен аталантарма пулăшнă. Валентин Ефимович каланă тăрăх, Григорий Спиридонович пур енчен те маçтăр пулнă. Вăл ачасене музыка инструменчĕпе те калаттарнă, йывăçран касса тĕрлĕ сĕтел-пукан хатĕрлеттернĕ. Рисовани урокĕсем те унпа интереслĕ иртнĕ. Çамрăк ача хăйне мĕн кирлине унтан вĕренсе пынă. Паянхи кун та ачаранах аталанса пыракан пултарулăх ăна канăç памасть. Валентин Ефимович çĕнĕрен те çĕнĕ алĕç енне вĕренсе пырать. Калăпăр, çÿçерен карçинккасем ăсталассине Валентин Ефимович иртнĕ çул кăна пуçланă. Ку ăсталăха вăл интернет урлă туптанă. Ĕçпе кăсăкланса ăстаçă кашнинчех тĕрлĕ япала туса пăхать: вазăсем, ывăссем, карçинккасем, турилккесем. Хăйĕн илемлĕ япалисене тăванĕсене, тус-юлташĕсене парнелет.

Валентин Ефимович нумаях пулмасть иртнĕ «Русь мастеровая» алĕç ăстисен конкурсне хутшăннă. Унта Раççейĕн 14 регионĕнчи 36 ăстаçă хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнă, алĕçĕн тĕрлĕ енĕпе тупăшнă. Хăшĕ – тĕрĕ тĕрлессипе, тепри – йывăçран касса тĕрлĕ хатĕрсем тăвассипе, виççĕмĕшсем вара – тăмран тĕрлĕ теттесем хатĕрлессипе. Валентин Харитонов хăйĕн пултарулăхне çÿçерен карçинкка çыхассинче кăтартнă. Конкурса хутшăнакансен сакăр сехет хушшинче хăйсен номинацийĕнче пĕр япала ăсталамалла пулнă. Валентин Ефимович ĕçĕпе жюри кăмăллă юлнă, вăл 3-мĕш степеньлĕ Диплома тивĕç пулнă.

**М.МАМУТКИНА.**

**Сăнÿкерчĕкре: В.Харитонов районти "Акатуй" вăхăтĕнче.**
***А.КАРПОВА сăнÿкерчĕкĕ.***